Муркаш район хаçачĕ

# Çĕнтерӳ ялавĕ

1944 çулхи майăн 5-мĕшĕнченпе тухать

60 (7485) № ✻ Юн кун, 2007 çулхи июлĕн (утă) 25-мĕшĕ ✻ Хакĕ ирĕклĕ

**Район уй-хирĕсенче**

## Вырма ĕçĕсем пуçланчĕç







*Тин кăна çур аки ĕçĕсене вĕçлерĕмĕр, сисмерĕмĕр те тыр-пула пӳлмесене хывас вăхăт та çитрĕ. Пулса çитнĕ уй-хирсем вара çĕр ĕçченĕсене тимлĕрех пулма ыйтаççĕ. Районта пĕтĕмпе 15000 гектар çинчен тĕш тырă, вăл шутран 3046 гектар çинчен кĕрхи культурăсене пухса кĕртмелле. Малтанласа палăртнă тăрăх вĕсен тухăçĕ гектар пуçне вăтамран 25-30 центнерпа танлашмалла.*

*Ĕнерхи кун районта Ильич ячĕпе хисепленекен хуçалăх вырмана икĕ “Енисей”, икĕ “Нива” «хир карапĕсемпе» тухрĕ.*

*Унти ĕç-хĕлпе паллаштарма эпĕ хуçалăх агрономĕнчен Федор Аверкиевич Егоровран ыйтрăм.*

*– Пĕтĕмĕшле вырма ĕçĕсене 740 гектар çинче туса ирттермелле. Вăл шутран 270 гектарне кĕрхи тулă йышăнать. 22 гектар çинчи пĕрремĕш репродукциллĕ “московская-39” сортлă кĕрхи тулăн тухăçĕ аван пуласси курăнать. Малтанласа палăртнă тăрăх вăл 40 центнерпа танлашмалла кашни гектар пуçне. Вырма ĕçĕ валли техникăсене юсаса çитернĕ. Çитес кунсенче уя тата тепĕр икĕ комбайн тухмалла.*

*Вырмана хутшăнакансене хавхалантарма ĕç условийĕсене йышăннă, вĕсем иртнĕ çулхипе танлаштарсан самай пысăк.*

*Паянхи кун хуçалăхра çĕр хатĕрлесси те япăх мар пырать. Кăçалхи ултавлă çанталăк пире самай тĕрĕслерĕ. Çурхи культурăсем хавшакрах пулчĕç. Çавăнпа та кĕрхи культурăсем çине ытларах тимлĕх уйăрасшăн, лаптăксене ӳстересшĕн. Паянхи куна 150 гектар çĕр хатĕрленĕ те ĕнтĕ. Кондициллĕ, пахалăхлă вăрлăх та янтăланă. Ку ĕçсем малалла пыраççĕ.*

**Р. ИЛЛАРИОНОВА.**

*Сăн ӳкерчĕксенче: вырма ĕçĕсем пуçланчĕç; вырмана хутшăнакан Ю. Егоров, В. Аврамов тата Е. Кириллов. Механизаторсем вырмана пахалăхлă тата кĕске срокра вĕçлес шухăшлă. Вырмана пĕрремĕш тухрăмăр пулсан, ăна эпир пуринчен малтан вĕçлеме тивĕçлĕ, теççĕ вĕсем.*

*Автор сăн ӳкерчĕкĕсем.*

**6 уйăх пĕтĕмлетĕвĕпе ирттернĕ канашлуран**

## Умра пĕр çул – малалла тата ӳсĕмлĕрех

**ĔÇЕ ВĂХĂТРА ТУНИ ВЫРĂНЛĂ**

Кăçалхи 6 уйăх район историне кĕрсе юлчĕ. Çак хушăра курăмлă утăмсем туни çинчен хаçатăн иртнĕ номерĕсенчен пĕринче илсе кăтартнă цифрăсем те çирĕплетсех параççĕ. Иртнĕ юн кун район администрацийĕн ларусен залĕнче кăçалхи çур çула пĕтĕмлетес тĕллевпе ирттернĕ пĕрлехи анлă ларура вара (унта предприятисемпе организацисен, хуçалăхсемпе учреждениисен ертӳçисем, район администрацийĕн пай пуçлăхĕсемпе специалисчĕсем, ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсем хутшăнчĕç) ытларах туса çитерейменн ĕçсемпе вĕсен сăлтавĕсем çинче чарăнчĕç. Канашлăва район пуçлăхĕ Ю. А. Иванов ертсе пычĕ. Доклад хыççăн тухса калаçакансене çитменлăхсен сăлтавĕсемпе вĕсене пĕтермелли çул-йĕрсем çинче чарăнма ыйтрĕ.

Кăçалхи çур çулта кам мĕнле ĕçлени вара район администрацийн экономика пайĕн ертӳçи Э. И. Симакова тунă докладран яр уççăнах курăнать.

–Чи йывăр лару-тăру ял хуçалăхĕнче. Ытти отраслььсенче ӳсĕмсем те пур, ĕçлени те курăнать, район пуçлăхĕ Ю. А. Иванов районăн 6 уйăхри аталанăвне пĕтĕмĕшле хак пани ку. Çавăнпа та критика “çумăрĕ” уйрăмах хăш-пĕр ял хуçалăх предпприятийĕсен ертӳçисем çине тăкăннинчен тĕлĕнме те кирлех мар пулĕ. Пĕтĕмĕшле районĕпе ял хуçалăхĕнче ӳсĕмсем пур-ха. Выльăх-чĕрлĕх сферине илер-ха. Çулталăк пуçланнăранпа кăçал пĕлтĕрхинчен аша 18, сĕте 2 процент ытларах туса илнĕ, кашни ĕнерен вăтамран 5,8 процент нумайрах сĕт сунă. Анчах та района каялла туртакансем те çук мар-ха. “Передовик”, Ленин яч.хис., Е. Андреев ячĕпе хисепленекен хуçалăхсемпе “Лидер”, “Рассвет” агрофирмăсенче сĕт туса илессине 45 – 29 процент чакарнă. Аш туса илесси иртнĕ çулхи çак вăхăтринчен “Колосра”, Ленин яч. хис. хуçалăхра, “Лидерта” чакса кайнă. Сысна çурисемпе пăру илессипе каялла кайнă хуçалăхсем çаксем: “Сеятель”, Чапаев яч. хис., “Чемеево”, “Лидер”, “Передовик”. Мĕн çитмест “Ударник”, “Свобода”, Ильич яч.хис., Суворов яч. хис., “Оринино”, “Герой” хуçалăхсем пек аш-сĕт туса илме?

Хуравĕ вара Эльвира Иосифовнан сăмахĕсенчех. Продуктивлăха ӳстермелле, выльăхсене çĕнĕлле тăрантармалла тата фермăра вăй хуракансен меллĕ ĕç условийĕсем пулмалла. Вара туса илнĕ продукцие вырнаçтарнă чухне те “пуç” ытлашши ыратман пулĕччĕ. Хальлĕхе вара аш туса илесси хăшпĕр хуçалăхсенче тăкаклă пулса пырать. Тĕслĕхрен, ĕне ашне туса илессин хăйхаклăхĕ Чапаев яч. хис., “Чемеево”, “Рассвет”, К. Иванов яч. хис., “Передовик” хуçалăхсенче унăн сутлăх хакĕнчен палăрмаллах пысăкрах. Ленин яч. хис, Чапаев яч. хис., Е.Андреев ячĕпе хисепленекен хуçалăхсенче сысна ашне туса илессипе çакăн пек лару-тăру.

(Вĕçĕ 2-мĕш стр.).

**Республикăра**

## Виçĕ çуллăх бюджет проекчĕ хатĕр

Тунти кун Чăваш Республикин Президенчĕ Николай Федоров эрне пуçламăшĕнче йăлана кĕнĕ йĕркепе Министрсен Кабинечĕн членĕсемпе тата федераци ведомствисен территори органĕсен ертӳçисемпе канашлу ирттернĕ.

Николай Федоров палăртнă тăрăх, Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕн çитес лăрăвĕнче хăйне евĕрлĕ документа – республикăн 2008 çулхи тата планпа пăхнă тапхăрти 2009, 2010 çулсенчи бюджечĕн проектне пăхса тухаççĕ. Чăваш Енре пуçласа виçĕ çуллăх бюджета сӳтсе явĕç, Раççейри хăш-пĕр регион çеç ăна виçĕ çуллăха йĕркелеме хатĕр, Чăваш Енре тĕплĕ планласа пынипе çапла туما май килнĕ.

Финанс министрĕ Николай Смирнов каланă тăрăх, бюджет проектĕнче Чăваш Енĕн 2020 çулччěнхи Социаллă пурнăçпа экономика аталанăвĕн стратегийĕн параметрĕсене, Чăваш Республикин Президенчĕн Патшалăх Канашне янă Çырăвĕсенче тата йышăнăвĕсенче палăртнă конкретлă тĕллевĕсене шута илнĕ. Çапла вара Чăваш Республикинче çитес кăтартусене палăртса бюджет ĕç-хĕлне туса пырĕç.

Н. Федоров виçĕ çуллăх бюджет проектĕнче ĕç укçине ӳстересси пысăк вырăн йышăннине палăртнă. “Чăваш Енре ĕç укçине çапла пысăк хăвăртлăхпа ӳстерни ку таранччен пулман. Эпир çак ĕçе хатĕр, Чăваш Республикин экономики те ку ĕçе пурнăçлама çирĕпленсе çитрĕ. Эпир ĕç укçине çулран çулах çапла палăрмаллах, Раççей Федерацийĕн ытти регионĕсемпе танлаштарсан нумайрах ӳстерсе пырăпăр”, – тенĕ республика пуçлăхĕ. Вăл сăмах бюджет сферинче ĕçлекенсем çинчен кăна мар, республикăн мĕн пур предприятийĕ çинчен пынине пĕлтернĕ. Вĕсен ертӳçисем пĕтĕмшле политика лару-тăрăвне ăнланса ĕçлеме тивĕçлĕ.

**ЧР ПА пресс-службы.**

**Семинар**

## Бюджета пурнăçлас ыйтусемпе

Час-часах пирĕн районта вăл е ку ыйтупа республика шайĕнчи мероприятисем иртеççĕ. Ку ĕнтĕ пирĕнтен тĕслĕх илмелли сахал маррине кăтартса парать. Иртнĕ эрне вĕçĕнче, акă, Муркашра ЧР Финанс министерстви ял тăрăхĕсен бюджечĕсемпе ĕçлес ыйтупа семинар-канашлу ирттерчĕ. Пирĕн пата асăннă министерствăн пирĕн районти, Шупашкарпа Çĕнĕ Шупашкарти, Сĕнтĕрвăррипе Çĕрпӳ, Шупашкарпа Етĕрне районĕсенчи пай ертӳçисемпе специалисчĕсем, çавăн пекех асăннă хуласемпе районсен администрацийĕсен финанс пайĕсен ертӳçисем килчĕç. Семинар ĕçне Чăваш Республикинчи Финанс министерствин казначейство Управленийĕн специалисчĕсем те хутшăнчĕç.

Чи малтанах пирĕн район администрацийĕн финанс пайĕн ертӳçи Р. И. Ананьева район администрацийĕн финанс пайĕ вырăнти бюджет ыйтăвĕсене татса панă чух ЧР Финанс министерствин пирĕн районти пайĕпе епле çыхăнса ĕçлени пирки каласа пачĕ. Пуçтарăннисем ЧР Федераллă казначействăн ЧР Управленийĕн пирĕн районти пайĕ вырăнти бюджет ыйтăвĕсене татса панă чух касса ĕçĕсене епле пурнăçласа пынипе те интересленсех паллашрĕç.

Семинарта РФ Бюджет кодексне кĕртнĕ улшăнусене, çавăн пекех федераллă бюджетран килекен укçатенкĕпе усă курассине , муниципаллă шайра бюджет процесне хутшăнакансене документсене йĕркелеме пулăшакан нормативлă актсене пăхса тухрĕç. Патшалăх тата муниципаллă ыйтусемпе таварсем кӳрсе килмелли, ĕçсем тумалли тата пулăшусем памалли заказсем вырнаçтарасси çинчен калакан федераллă саккуна пурнăçланă чух та ыйтусем сахал мар сиксе тухаççĕ. Çак икĕ темăпа тухса калаçнă хыççăн ЧР Финанс министерствин бюджета казначейство тĕлĕшĕнчен пурнăçламалли методологи центрĕн секторĕн ертӳçи Г. Н. Чумарова тата Казначейство управленийĕн тӳлевсемпе ĕçлекен пай пуçлăхĕн çумĕ В. А. Алякина тĕплĕн хуравларĕç.

Семинарта пирĕн районти централизациленĕ бухгалтери ял тăрăхĕсен администрацийĕсен тупăшĕсемпе тăкакĕсем тĕлĕшпе епле ĕçлесе пынине пăхса тухрĕç. Çавăн пекех – ЧР Финанс министерствин пирĕн районти пайĕ вырăнти бюджетсен казначейство тĕлĕшĕнчи ĕçĕсене мĕнле пурнăçланине те. Семинар ĕçĕпе унта хутшăнакансем кăмăллă юлчĕç.

**Л. ПАВЛОВА.**

**Район хаçатне малалла та çырăнтараççĕ**

***Хисеплĕ вулакансем! Сире çавăн çинчен аса илтерес тетпĕр. Енчен те эсир тĕрлĕ сăлтава пула районта тухса тăракан «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçата кăçалхи иккĕмĕш çур çул валли çырăнма ĕлкĕрейменн пулсан, ăна август уйăхĕнчен тытăнса илмелле те çырăнма пулать.***

**«Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçат редакцийĕ.**